26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
26
ЫРСАРНИКУН
255(6492) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăсемпе тракторсен паркне юсанă çĕрте Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилер!

Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн рабочийĕсемпе служащийĕсем машинно-тракторнăй станцисенчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладне пĕтĕм çĕршывпа пĕрле тленĕ хыççăн пирĕн чĕресем çав тепысăк савăнăçпа тулчĕç. Аслă çулпуç—совет çыннисем вăй-хăвата хĕллемесĕр ĕçленине Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте халăх халиччен курман пулман паттăр ĕç туни пулать, тесе хакларĕ.

Çавăнпа пĕрлех, Сталин юлташ, малашнехи кĕрешÿре йывăрлăхсем пулассине палăртса, ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн пĕтĕм совет халăхне çĕнĕрен ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Нумай миллионлă колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешни—ылханлă тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешни пулнине лайăх пĕлеççĕ. Çак кĕрешÿре машинно-тракторнăй станцисем пысăк та хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен производствăри ĕçĕ ялхуçалăхĕнчи çитĕнÿсен никĕсĕ пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывпа фронт умĕнчи ĕç вăл—Хĕрлĕ Çарпа çĕршыври халăхсене тырпул, аш-какай, сĕт-çу, пахча-çимĕçсем тата çĕрулми, промышленноçа—ялхуçалăх чĕртаварĕсем тапти-сыпписĕр парса тăма колхозсене пулăшасси пулать. Çак хисеплĕ ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе тăма МТС-сенчи тракторсене, комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене çитес çулхи уйхир ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлес пулать.

Эпир МТС-сенчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене тракторсене юсас ĕçе ăнăçлăн пурнăça кĕртессишĕн, ялхуçалăх машинисемпе вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли хатĕрсене çуракине лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнетпĕр. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн работникĕсем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илеççĕ:

1. Кĕрхуннепе хĕллехи тапхăрта тракторсене юсамалли плана январĕн 25-мĕшĕ тĕлне, вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре юсамалли плана 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

2. Хĕллехи вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пăхса усрасса кăтартуллă организацилемелле.

3. Комбайнсен моторĕсене тата вĕсен тĕп узелĕсене (касакан аппарат, полотнищесене, сăнчăрсене тата ыт. те) 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтермелле, вĕсем валли запаслă пайсем çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла.

4. Колхозсене лашапа ĕçлемелли инвентаре — плугсене, сеялкăсене, культиваторсене юсама пулăшмалла.

5. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен трактористсем тата трактор бригадисен бригадирĕсем пулса ĕçленĕ çынсене татах вĕрентес ĕçе организацилемелле. Çавăн пекех çитмен çамрăк трактористсене çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлемелле.

Машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлекен юлташсем! Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре юсамалли плана срокчен тата пысăк пахалăхпа пурнăça кĕртер!

МТС-семпе колхозсенчи машинăсене хĕллехи вăхăтра пăхса усрассине лайăх организацилер!

Колхозсене лаша кÿлсе ĕçлемелли мĕнпур инвентаре хăвăрт та лайăх юсама пулăшар!

Хĕллехи вăхăтра опытлă трактористсен квалификациллĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлер!

Машинно-тракторнăй станцисенчи мĕнпур работниксене эпир çаксене тума чĕнетпĕр:

Машинăсене юсас ĕçре мастерскойсенчи станоксен вăйĕпе туллин усă курăр! Оборудованисен ĕç тухăçлăхне ÿстермелли çĕнĕ майсене шыраса тупăр! Тĕслĕ металлсемпе юсама кирлĕ материалсене перекетлĕн те тирпейлĕн тыткалăр!

Ремонт ĕçĕнче ĕçлекен юлташсем! Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине ирттерме машинăсемпе тракторсен паркне лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухăр! Пĕтĕм вăйсене фронта пулăшнă çĕре парар!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, юратнă тăван Сталин!

Чĕнсе каланине Горький облаçĕнчи Каменка МТС работникĕсен пухăвĕнче сÿтсе-явса йышăннă.

Чĕнсе калани çине çаксем алă пуснă: Каменка МТС-ĕн директорĕ В. Г. МОКРОПОЛОВ, старши агроном ИЛЬИН, старши механик Я. И. БОРОНЕНКОВ, профсоюз комитечĕн председателĕ А. М. ПОЛУЭКТОВ, трактор бригадисен бригадирĕсем Д. Е. КУДАКОВ, Н. А. ЧЕРНОВ, А. А. ЦАПАЕВ, К. С. ФИЛАТ, тракторист А. МАРКИЧЕВ, трактористка Н. И. КАЛИНИНА, мастерской заведующийĕ И. И. ПАНИКАРОВ, комбайнер Р. А. ЦИЛИНА, слесарь И. С. ШАРАЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКИ

БАЛТИКА СЫВĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, вирлĕн наступлени туса пырса, декабрĕн 24-мĕшĕнче ГОРОДОК хулипе пысăк чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ, çавăн пекех тата 60 ял тытла йышăнса илнĕ, çав шутра—МИШНЕВИЧИ, БЫВАЛИНО, БЕРЕЗОВКИ, БУБНЫ, СТРАНАДКИ, МАЛОЕ КАШО, СЫРОВНЯ, ВОЛКОВО, СИМАНЯТА ятлă ялсем.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсен йышлă вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тунă.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 69 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери вутĕпе тăшманăн 13 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Балтика сывăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, Невель хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре вирлĕн наступлени туса пырса, нимĕçсен Городок хулипе пысăк чугун çул станцине сывăхĕнчи оборони патне пырса çитнĕ. Çав рубеж вăл Коша кÿлли тăрăх тата Горожанкăпа Пальминка шывĕсем тăрăх пынă. Унта хирти укрепленисем питĕ нумай пулнă. Нимĕçсем унта çын кĕрме тăмалăх тăрăн траншейĕсем тăтăшах чавса тухнă, пемелли площадкăсем тата дзотсемпе блиндажсем нумай туса хунă, вĕсем умне йĕплĕ пралуксем карса хунă тата минăсем лартса тухнă. Городок хулинче тата унăн çывăхĕнчи вырăнсенче артиллерипе минометсен 40 батарейи ытла пулнă, çав шутра темиçе батарея улта кĕпçеллĕ миномётсен батарейисем пулнă. Пирĕн пехотинецсемпе артиллеристсем, çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, Коша кÿлли урлă тата Горожанка шывĕ урлă каçнă. Кĕтмен çĕртен пырапыра çапса, совет боецĕсем Городок хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре темиçе меллĕ позицие тăшмантан тасатнă та унта çирĕпленсе ларнă. Çав вăхăтрах пирĕн чаçсем Пальминка шывĕ урлă каçнă та тăшмана çурçĕр-хĕвелтухăç енчен атакăланă. Флангсенчен пырса çапнине сирсе яма хăтланса, нимĕçсем Городок хулинчен çурçĕртерехри участока вăй нумай яман. Çакăнпа пирĕн çарсем часах усă курнă. Вирлĕн малалла куçса, совет боецĕсем хулан çурçĕр енчи пайне, танкистсем — чугун çул станцине вăркăнса кĕнĕ. Нимĕçсене пур енчен те хĕссе пырса, пирĕн çарсем паян нимĕçсен Витебск енчи оборонин паха пунктне —Городок хулипе чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ. Чугун çул станцинче тата хула урамĕсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 2.500 вилли таран выртса юлнă. Пирĕннисем трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 15 танк, 38 тупă, çĕсенчен пиллĕкĕшĕ—хăй тĕллĕн çÿрекеннисем, 100 автомашина тата боеприпассемпе çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Малалла наступлени туса пырса, пирĕн çарсем 60 яла ытла нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

* * *

Жлобин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн йышлă вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Пĕр участокра нимĕçсем çапăçăва пехотăн 3 полкне, 80 танк тата 10 бронемашина кĕртсе янă. Совет пехотинецĕсемпе артиллеристĕсем тăшманăн умлăн-хыçлăн тунă вунă атакине сирсе янă, тăшмана калама çук пысăк çухату тÿснерне. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.200 вилли выртса юлнă. Нимĕçсен 33 танкне тата 4 бронемашинине сутарса янă е пĕрре çĕмĕрнĕ. Леш пĕр участокра пĕр чăсăн подразделенийĕсем контратака тума хăтланнă, анчах тăшмана каялла сирсе янă, çавăн чухне гитлеровецсене пĕр батальон таран вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн позицисене çитиччен нимĕçсен çунса кайнă 5 танкĕ тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупи ларса юлнă.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсене темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене пĕр рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Партизансен пĕр ушкăнĕ çак кунсенче шоссе çулĕн пĕр участокĕ çине минăсем лартса хăварнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен салтаксем лартса пыракан 5 автомашини сирпĕнсе кайнă.

* * *

Нимĕçсен 51-мĕш бомбардировочнăй эскадрин 2-мĕш группин 6-мĕш отрядĕнчи «Юнкерс—88» бомбардировщикăн тыткăна лекнĕ командирĕ Гуго Бартель фельдфебель çапла каласа панă: «Пирĕн эскадрăра 4 группа. Кашни группăра виçшер отряд. Хĕвелтухăç фронтĕнче пирĕн эскадра калама çук пысăк çухату тÿсрĕ. Пире самолетсем темиçе хут та хушса панă пулин те, хальхи вăхăтра отрядсенче 9-шар самолет вырăнне 2—3-шер самолет çеç тăрса юлнă. Самолетпа вĕçекен çынсем çитменни питĕ хытă палăрать. Авиаци çитменнине пула нимĕç командованийĕн летчиксене тăтăшах пĕр фронтран тепĕр фронта куçарма тивет. Çапла, акă, 2-мĕш группа Кировоградра тăратчĕ. Унтан пире васкасах кăнтăр енне ячĕç, декабрĕн пуçламĕшĕнче вара Калиновка ялĕнчи аэродрома куçарчĕç. Çак кунсенче манăн самолета персе сенлерĕç, эпĕ вара вырăссем патне тыткăна лекрĕм».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Полесье облаçĕнчи Хойники районĕнчи мирлĕ çынсене темиçе пин çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ. Гитлеровецсем Хойники поселокĕнче кăна 500 совет гражданне ытла персе вĕлернĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ стариксем, хĕрарăмсем тата ачасем пулнă. Нимĕçсем пуринчен ытла Белоруссин интеллигенцийĕн представителĕсене тытасшăн çунса çÿренĕ. Фашистла пуçкасакансем учительсене, культура работникĕсене тата совет служащийĕсене нумай вĕлернĕ. Нимĕçсем Люба Дороковская тата Мария Чекан учительницăсене, Наляговрич учителе, Кравченко инженера, Ташкевич художнике, служащисене—Соколова, Сокович, Кулаковская, Подкопаева тата ыттисене те тискеррĕн вĕлернĕ. Нимĕçсем пĕр айăпсăр нумай çынна этемле мар тискеррĕн асаплантарнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шоссе çулĕсен Управленийĕн шоссе çулĕсем тунă çĕрте уйрăмах палăрнă работникĕсене, партипе совет организацийĕсен руководителĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 251-мĕшпе 252-мĕш №№-че).

68. Евстафий Никифорович **Немцева** — Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.

69. Евдокия Никандровна **Никандровăна** — Советски районри «Клевер» колхозăн колхозницине.

70. Иван Николаевич **Николаева**— Çĕрпÿ районĕнчи «1-ое мая» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.

71. Наталия Николаевна **Николаевăна** — Шупашкар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

72. Александра Васильевна **Никонорована** — Тăвай районĕнчи Тăрмăш колхозĕн колхозницине.

73. Василий Александрович **Обухова**.

74. Михаил Георгиевич **Олиференкона**.

75. Андрей Петрович **Оракчеева**— 4-мĕш номерлĕ строительство начальникĕн помощникне.

76. Иван Николаевич **Пантелеева** —материалсемпе техника снабжени конторин начальникне.

77. Александр Алексеевич **Парамонова** — çулйĕр Управленийĕн главнăй бухгалтерне.

78. Ольга Алексеевна **Патрикеевăна** — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красный Четай» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.

79. Пелагея Петровна **Петровăна**— Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозăн колхозницине.

80. Алексей Георгиевич **Перкусева** —младши сержанта.

81. Юлий Ефимович **Пинсона** — çулйĕр Управлени начальникĕн заместительне.

82. Николай Федорович **Поздеева** —Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

83. Татьяна Михайловна **Поклоновăна** — строительство районĕнчи трактористкăна.

84. Яков Никитич **Попова** — Шупашкар районĕнчи «Красный конь» колхозăн колхозникне.

85. Владимир Иванович **Потапова** —автоколонна начальникне.

86. Гордей Прокопьевич **Прокопьева** — çулйĕр мастерскойĕсен ремонт енĕпе ĕçлекен слесарьне.

87. Николай Михайлович **Прытченкова** — Куславкка райсовет исполкомĕн председательне.

88. Петр Романович **Романова** — Куславкка районĕнчи «Правда» колхозăн колхозникне.

89. Роман Романович **Романова**.

90. Александр Николаевич **Рудакова**.

91. Фаина Александровна **Салминăна** — Комсомольски районри «Коммунар» колхозăн колхозницине.

92. Семен Кириллович **Саракеева**.

93. Максим Семенович **Семенова**— Калинино районĕнчи «Клевер» колхозăн лавçине.

94. Иван Алексеевич **Скворцова**— Шăхасан райсовет исполкомĕн председательне.

95. Яков Дмитриевич **Сметанина**— красноармееца.

96. Василий Максимович **Соловея** —строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи шофера.

97. Клим Григорьевич **Соколова**— Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн колхозникне.

98. Александр Иванович **Соколова** —5-мĕш номерлĕ автоколонна шоферне.

99. Анна Максимовна **Солдатовăна** —Канаш районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.

100. Михаил Ильич **Сосновские**.

101. Георгий Спиридонович **Спиридонова** — Етĕрне райсовет исполкомĕн председательне.

102. Акулина Степановна **Степановăна** — Шăхасан районĕнчи «Гигант» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.

103. Анна Степановна **Степановăна** —Канаш районĕнчи «Хĕрлĕ Сăлтăр» колхозăн звеньевойне.

104. Григорий Прокопьевич **Строганова** — строительствăн 4-мĕш районĕнчи главнăй механикне.

105. Дмитрий Васильевич **Стяжкова**.

106. Николай Ильич **Сука**—старши сержанта.

107. Станислав Феликсович **Сухоцкие** — Куславкка карьер управленийĕн начальникне.

108. Михаил Федорович **Тарасенкона** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи десятникне.

109. Осип Тимофеевич **Тимофеева** —Çĕрпÿ районĕнчи «Дружба» колхозăн председательне.

110. Алексей Григорьевич **Тябута** —строительствăн 6-мĕш номерлĕ районĕнчи старши десятникне.

111. Павел Васильевич **Фельдшерова** — Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» колхозăн председательне.

112. Михаил Филиппович **Филиппова** — Етĕрне районĕнчи «Дружба» колхозăн колхозникне.

113. Григорий Христофорович **Христофорова** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи платникне.

114. Николай Иванович **Хромова**— Етĕрне ВКП(б) райкомĕн секретарьне.

115. Петр Савельевич **Хуповкăна**— лейтенанта.

116. Василий Васильевич **Чельцова** —Çĕрпÿ районĕнчи Елаш колхозĕн колхозникне-бригадира.

117. Дмитрий Ильич **Чимарова** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ район начальникĕн заместительне тата парторганизаци секретарьне.

118. Николай Степанович **Шишкова** — Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозăн колхозникне.

119. Лазарь Абрамович **Шкуровича** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи главнăй бухгалтера.

120. Георгий Иосифович **Шубина** —строительствăн 7-мĕш номерлĕ районĕнчи ПТС начальникне.

121. Петр Алексеевич **Шувалова**— çулйĕр Управленийĕн иккĕмĕш отдел начальникĕн заместительне.

122. Петр Гурьевич **Шутеякона** — çулйĕр мастерскойĕсен техникне.

123. Яков Евгеньевич **Эпштейна** — санитари чăсĕн начальникне тата строительствăн 6-мĕш номерлĕ районĕнчи парторганизаци секретарьне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕ.

Стахановецсен слечĕ

Социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохрана управленийĕ Вăрнар леспромхозне виççĕмĕш премии панă. Çак чаплă премие илнĕ хыççăн—декабрĕн 17-мĕшĕнче—вăрманта ĕçлекен стахановецсен слечĕ пулса иртрĕ. Слетра 90 çынна премии пачĕç.

Слетра Шăхасан районĕнчи колхоз членĕ стахановец-лучник Николай Михайлов юлташ, «Новая жизнь» колхоз членĕ Андрей Назаров юлташ, Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз членĕ Кошкин юлташ тата ытти юлташсем, пурĕ 13 çын, тухса калаçрĕç. Вĕсем кашниех ĕç тухăçлăхне тата ытларах ÿстерме сăмах пачĕç. Слета пухăннă стахановецсем чугун çул транспорчĕ валли иккĕмĕш çур çулти планне декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне, 1944-мĕш çулхи пĕрремĕш кварталти планне мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕç. Çак обязательствăсене работниксем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Декабрĕн 22-мĕшĕ тĕлне леспромхоз вăрман хатĕрлевĕн иккĕмĕш çур çулти плане 104 процент тултарчĕ.

Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне леспромхозра пурĕ 35 стахановецсем пулнă, халĕ вĕсен шучĕ 200 çынтан та иртет. Вăрманта уйрăмах Шăхасан районĕнчен пынă колхозниксем аван ĕçлеççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем колхозник Михайлов юлташ нормăна 200—225 процент тултарса пыраççĕ. «Свет» колхоз членĕсем Николаева, Прохорова, Федорова, Убакова юлташсем куллен нормăна 150—200 процент тултараççĕ.

«Свет» колхоз 1943-мĕш çулхи плана кăна мар, 1944-мĕш çулхи пĕрремĕш кварталти плана та тултарчĕ. Çавăн пекех «Красный луч», Тельман ячĕпе тăракан колхозсем те иккĕмĕш çур çулти плана ытлашшипех тултарчĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

Çĕнĕ çул елкине хатĕрленеççĕ

ÇĔРПУ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Ялти шкулĕнчи учительсемпе вĕренекенсем çĕнĕ çул елкине хатĕрлеме тытăнчĕç. Елкăна илемлетмелли теттесене вĕсем хăйсемех тăваççĕ. Халĕ ачасем çĕнĕ çул курсене тăшасе вĕренчĕç. Шкул ачисем валли кучченеçсем хатĕрлемешкĕн 8 пăт тула сăнахе хатĕрленĕ.

Сталинăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем çĕнĕ çул ячĕпе фронтовиксем валли парнесем хатĕрлеме 10 килограмм çăм пухнă. Унтан хĕрачасем алсишсемпе носкисем çыхаççĕ. Кунсăр пуçне 50 енчĕк 40 çăмса тутри хатĕрленĕ.

П. ПАВЛОВ.

IV-мĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн

Сĕнтĕрвăрри районĕ (райфо заведующийĕ Анкудинов юлташ) 1943-мĕш çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлнĕ 102,7 процент пурнăçларĕ. Унти финанс работникĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пычĕç. Плана ялхуçалăх налогĕ енĕпе 106,2 процент, Военнăй заем енĕпе 126,6 процент, уйрăм вкладсем енĕпе 168 процент, çĕнĕ вкладсем енĕпе 327 процент тултарчĕ. Çавăн пекех ку ĕç Вăрмар, Ишлей, Октябрьски районсенче те ăнăçлăн пулса пырать.

Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, ку ĕç вăрахăн пулса пырать-ха. Хĕрлĕ Чутай районĕ (райфо заведующийĕ Базранов) декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне IV-мĕш кварталти финанс планне 33,4 процент кăна пурнăçланă. Çапла вара район государство умĕнче IV-мĕш кварталта налогсем енĕпе 2 миллион тенкĕ парăмлă пулса тăчĕ. Çавна пула районри учительсемпе медработниксем вăхăтра ĕçукçи илеймесĕр тăраççĕ. Райфо заведующине—Базранова халăх укçи-тенкине мобилизацилес ĕçе тивĕçлĕн ертсе пыманшăн ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ тата Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Апла пулин те вăл финанс ĕçне лайăхлатман. Финанс работникĕсем хушшинче çирĕп дисциплина пулман. Çавăнпа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ Базранова ĕçрен хăтарчĕ, районри прокурора ăна çак ĕçсемшĕн судпа айăплама хушрĕ.

Финанс планне пурнăçлас ĕç Парачкав (райфо заведующийĕ Симарзин), Первомайски (райфо заведующийĕ Давыдов), Элĕк, Кувакино, Калинино, Чкаловски районсенче те тÿсме çук начар пулса пырать.

Асăннă районсенче партипе совет активĕпе финанс работникĕсем ССР Союзĕн Совнаркомĕ кăçалхи декабрĕн 4 мĕшĕнче, Чăваш АССР Совнаркомĕ декабрĕн 9-мĕшĕнче „Госбанкăн декабрь уйăхĕнчи кассовăй планĕ çинчен" йышăннă постановленисене пурнăçлассишĕн кĕрешмеççĕ.

1943 çул вĕçленсе пырать. 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пур районсен те IV-мĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Укçа-тенкĕ çĕршыва халĕ мĕн пек кирли пуриншĕн те паллă. Çĕршыв умĕнче парăмлă пулни — вăл чăтма çук киревсĕр ĕç. Укçа-тенкĕ парăмне вăхăтра татманни—çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçламанни пекех шутланать.

Районсенчи партипе совет активĕн тата финанс работникĕсен çак юлнă вăхăтпа туллин усă курса, IV-мĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшса ĕçлемелле.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Австрали посланникĕ Д. Малоней господин ССР Союзне килни

Çак çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче Австралин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ Малоней господин Мускава килнĕ. Малоней господина аэродромра НКИД-ăн Европăри ĕçсен иккĕмĕш отдел заведующийĕ К. В. Новиков юлташ, НКИД-ăн протокольнăй отдел представителĕ К. Л. Волохов юлташ, Австралин ССР Союзĕнчи миссийĕн К. Оффисер господин повереннăй пуç пулса ертсе пыракан дипломатиллĕ составĕ кĕтсе илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче

А. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронтшăн ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсенче, çав шутра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул хушшинче ĕне выльăхсен хисепĕ 75 процент, сыснасен хисепĕ 45 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 123 процент ÿсрĕ. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн 1942-мĕш çулта пирĕн республика Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак пысăк награда Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене 1943-мĕш çулта тата вăйлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Чăваш республикинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла ÿстерес тата ăна лайăхлатас ĕçре СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстермелли тата вĕсен тухăçлăхне хăпартмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленийĕ çав тери пысăк пырăн йышăнчĕ. Кăçалхи 11 уйăх хушшинче колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана продуктшăн усракан мĕнпур выльăхсем енĕпе те чылай иртгерсе тултарчĕç. Çав вăхăт хушшинче республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕхсен йышне çакăн чухлĕ ÿстерчĕç: ĕнесемпе вăкăрсен йышне — 24,9 процент, сыснасен йышне —13,2 процент, сурăхсемпе качакасен йышне—28 процент. Мĕнпур выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ ÿснипе пĕрлех кăçал ама-выльăхсен йышĕ те чылай ÿсрĕ. Пĕлтĕрхи шайран кăçал ĕнесен йышĕ 9,3 процент, сысна амисен йышĕ—9,2 процент, сурăхсемпе качакасен йышĕ — 17,2 процент ÿсрĕ.

Колхозсем государствăна аш-какай памалли обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçларĕç. Государствăна 1943-мĕш çулта аш-какай памалли плана пирĕн республика октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕ. Аш-какая 1943-мĕш çулшăн парса татнă хыççăн—Чăваш республикинчи колхозсем 1944-мĕш çулшăн та аванс шучĕпе 100 пин пăт ытла пачĕç. Ку çеç те мар, республикăри нумай колхозсем 1945-мĕш çулшăн та какай параççĕ. Кăçал декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пирĕн республика пĕлтĕр çав вăхăт тĕлне панинчен 212.000 пăт ытларах какай пачĕ.

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене пулăшмашкăн Чăваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем 5.000 пуç ытла выльăх уйăрса пачĕç. Кунсăр пуçне, колхозниксемпе колхозницăсенчен Смоленск облаçĕнчи колхозсем валли 3143 сысна, Орел облаçĕнчи колхозсем валли 3.390 сурăх, Курск облаçĕнчи колхозсем валли 5.000 хур сутăн илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх туянмашкăн фронтовиксен çемьисене те нумай пулăшнă. Çар çыннисен çемьисем республикăри колхозсенчен 300 пăру, 20.000 сысна çури ытла, 700 сурăх тата 35.000 пуç кайăк-кĕшĕк илнĕ.

Колхозсем колхозниксене выльăх-чĕрлĕхлĕ тумашкăн та чылай выльăх уйăрса панă. Çак тĕлĕшпе кăçал çеç 12.000 пуç выльăх уйăрнă.

Пирĕн республикăри колхозсем кăçал ялхуçалăхĕнче пуçласа вăкăрсемпе усă курма тытăнчĕç. Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен каснă вăкăрсен хисепне 9.000 пуçа çитерне. Çак ĕç хуçалăхра кирлĕ ĕç пулса тăнине колхозсенчен нумайĕшĕ ăнланса илчĕç ĕнтĕ. 1944-мĕш çулта каснă вăкăрсен хисепне 12.000 пуçа çитерме палăртса хунă.

Чăваш республикинчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ ÿснипе пĕрлех унăн пахалăхĕ те хăпарса пычĕ. Çакă вăл пуринчен малтан мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕхсен ăратлăхĕ лайăхланнинчен курăнать. Пирĕн республикăра лайăх ăратлă выльăхсем пурне пула, ăратлă выльăх фермисем тума май килчĕ. Пирĕн республикăра ăратлă выльăх фермисем çакăн чухлĕ пур: ĕне фермисем —19, сысна фермисем—22, сурăх фермисем — 5, лаша фермисем—10.

Малта пыракан нумай колхозсем тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан нумай колхозниксем кăçал выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Çĕрпÿ районĕнчи «Молодая сила» колхоз кашни ĕне пуçне 1850 литр сĕт суса илнĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра ĕне сăвакан А. И. Душева 9 уйăх хушшинче кашни ĕне пуçне планра кăтартнă 1.400 литр вырăнне 1.843 литр сĕт суса илнĕ. Пăрачкав районĕнчи «Большевик» колхозра пĕр сурăх пуçне планра кăтартнă 2,4 килограмм вырăнне 3,5 килограмм çăм илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Знамя труда» колхозра çăмарта тăвакан кашни чăх пуçне 75 çăмарта вырăнне 104 çăмарта илнĕ.

Чăваш республики Мари республикипе ăмăртать. Чăваш республикинчи колхозсем çав ăмăртура пур ĕçпе те, çав шутра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе те, мала тухассишĕн кĕрешеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре 1943-мĕш çулхи 6 уйăх хушшинче тунă çитĕнÿсене пула Чăваш республикине кăçал та Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата тăратрĕç. Çакăнпа пĕрлех, Совет Союзĕн Наркомземĕ, Совет Союзĕнчи районсен колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе малалла ÿстерессишĕн пынă ăмăртăвĕн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, Совет Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ Ялавне тата укçан паракан премине илме тивĕçлĕ пулнă 105 район шутне Чăваш республикинчи 6 района кĕртнĕ. Çав Хĕрлĕ Ялава илме Чăваш республикинчи районсенчен çаксене кандидата тăратнă: Элĕк, Вăрнар, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр тата Шăхасан районĕсене.

Хĕрлĕ Çарăн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă чаплă çитĕнĕвĕсемпе хавасланса, пирĕн республикăри районсемпе колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чи пысăк ÿсĕмсем тăвассишĕн социализмлă ăмăрту сарса ячĕç. Çав ăмăртура 1943-мĕш çулăн пĕрремĕш çур çулĕ пĕтнĕ çĕре Элĕк районĕ чи мала тухрĕ, ăна вара Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Хальхи вăхăтра Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Вăрнар, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ, Шăхасан тата Вăрмар районĕсем илме тăрăшаççĕ. Çав районсенче продуктшăн усракан хăшпĕр выльăхсен йышĕ 16 процентран пуçласа 42 процент таран ÿснĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан районсемпе колхозсем çавăн пек çитĕнÿ туни вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен кадрсемшĕн тăрăшнинчен килет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен работниксене суйласа илес, вĕрентес тата пĕр вырăнта ĕçлеттерес ыйтусем çине республикăри организацисем те, районсенчи организацисем те тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлеме кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе кăçал, ытти мероприятисемпе пĕрле, колхозсен чи лайăх ĕçлекен фермисенче уйрăм йышши ĕçсене сÿтсе-явмалли семинарсем туса иртгернĕ. Çав семинарсенче çынсем 1260 колхозран пулнă, унта ĕне сăвакан 1000 хĕрарăм ытла, сысна пăхакан 850 çын, 870 кĕтÿçĕ тата ытти çынсем те, пурĕ 4650 çын вĕреннĕ. Кунсăр пуçне, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен кадрсене хатĕрлемешкĕн тĕрлĕ курссенче вĕрентнĕ, халĕ те вĕрентеççĕ.

Республикăри колхозсен фермисенче кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн чаплă мастерĕсем ÿссе çитĕнчĕç. Туллимар даннăйсем тăрăх, кăçал çак ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен 1.106 çынна ĕçшĕн хушса памалла пулать. Çав работниксенчен нумайĕшне тивĕçлипех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем тесе шутлама пулать. Вĕсенчен çаксене палăртмалла: Шупашкар районĕнчи «Вторая Пятилетка» колхозра ĕне сăвакан Надежда Карпеева, вăл хăй пăхакан кашни ĕне пуçне кăçал 1 400 литр вырăнне 1570 литр сĕт суса илнĕ; Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра пăру пăхакан А. И. Белоусова, вăл хăйне пăхма уйăрса панă пăрусене пурне те сыхласа хăварнă; унăн пăрушĕсем талăкра вăтамран 608 грамм хутшăнса пынă (планра кăтартнă 550 грамм вырăнне); Красноармейски районри «XII лет Октября» колхозăн старши конюхĕ Романов 58 кĕсререн 58 тиха илсе, пурне те сыхласа хăварнă: Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозра сурăх пăхакан Мария Волкова 100 сурăхран 141 пăтек илсе, пурне те пăхса çитĕнтернĕ.

Республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕç çав тери ответлă ĕç пулса тăчĕ. Кăçал республикăри колхозсенче ĕнесем, сыснасем тата сурăхсем валли —мĕн пурĕ 16.643 пуç выльăх валли—283 вите тунă. Кунсăр пуçне, кайăк-кĕшĕкне кроликсем валли (9.825 пуç валли) 50 çурт тунă. Ятарласа тунă витесем çитмен колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсене колхозниксен пушă витисене тата ытти юрăхлă хуралтăсене вырнаçтарнă.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсене хĕл вăхăтĕнче тăрантарса усрамашкăн республикăри колхозсем шултăра апат, утă шучĕпе шутласан, 734.635 тонна хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне тата сĕтеклĕ апат хатĕрленĕ: силос—127.640 тонна, тымар-çимĕçсем—57.450 тонна; йĕкел—1.074 тонна, çулçăллă апатсем — 34.236 лав, кайăк-кĕшĕке витамин парас шутпа парса тăмалли вĕлтрен милĕкĕсем 5.880 килограмм хатĕрленĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем питĕ пысăк ырăн йышăнса тăраççĕ. Зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем ответлăха лайăх туйса ĕçленĕ çĕрте, вĕсем хăюллăн, тимлĕн, çине тăрса ĕçленĕ çĕрте выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă.

Колхозсене ветеринарипе зоотехника енчен пулăшса тăрас ĕçе лайăхлатнине пула, выльăх-чĕрлĕхсем чирленипе вăйлăн кĕрешме тата колхозсенче зоотехника ĕçне лайăх йĕркелеме май пулчĕ. Çĕрпÿ районĕн старши зоотехникĕ В. И. Игнатьев колхоз фермисенче ĕçе тата ĕçшĕн тÿлессине СССР Наркомземĕн инструкцийĕ тăрăх йĕркеленĕ, пуçламĕш зоотехника учетне тата шалти йĕркесене пурнăçа кĕртнĕ, фермăсенче выльăхсене тĕрĕс тăрантарса усрамалла тунă. Елчĕк районĕнчи старши ветеринари врачĕ Улендеев юлташ выльăх-чĕрлĕхсен чирĕсемпе кĕрешмелли лайăх майсем шырать. Лашасен «мыме» чирĕпе кĕрешес тĕлĕшпе вăл уйрăмах лайăх ĕçсем тунă. Çав ĕçсемшĕн ăна, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ хăйĕн Хисеплĕ грамотипе тата СССР Наркомземĕ «Социализмлă ялхуçалăх отличникĕ» значокпа наградăланă.

Чăваш республикинчи колхозниксем колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. Анчах та çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕсене пĕтерни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма пулăшĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — лашасем ĕрчетмелли плана тултарманни пулать. Республикăра лашасем ĕрчетмелли плана Элĕк, Калинино, Красноармейски тата Сĕнтĕр районĕсем çеç тултарнă.

Лашасем ĕрчетмелли плана тултарманнипе пĕрлех тата нумай чухне лашасене начар пăхаççĕ. Çак тĕлĕшпе Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ темиçе хут та кăтартса панă пулин те, лашасене пăхас ĕçре халичченех обезличка пырать-ха, лашасемпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Çавна пула лашасем час-часах сиенсĕрен тухаççĕ. Кунсăр пуçне, уйрăм колхозсемпе районсенче нумай кĕсресем хăм пăрахаççĕ, çавăн пирки çуралакан тихасен хисепĕ чакать.

Республикăра 1943-мĕш çулта, вăтамран илсен, кашни 100 кĕсререн 32 тиха илнĕ. 1943-мĕш çулта çак районсенче тихасем пуринчен те сахалтарах çуралнă: Кувакино, Пăрачкав, Тăвай, Шăмăршă, Йĕпреç, Улатăр районĕсенче. Çак асăннă районсенче кашни 100 кĕсре пуçне 10 тихаран пуçласа 19 тиха таран çеç çуралнă.

Ялхуçалăхĕнче лаша тĕп туртăм вăйĕ пулса тăрать. Çавăнпа та лашасене сыхласа хăварас тата вĕсен йышне ÿстерсе пырас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çавăн пекех тата çамрăк выльăхсем нумай вилни пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Чăн та ĕнтĕ, 1942-мĕш çулхипе танлаштарсан, пирĕн республикăра кăçал çамрăк выльăхсем сахалтарах вилнĕ. Анчах та уйрăм районсенче вилнĕ çамрăк выльăхсен проценчĕ чылай пысăк. Çапла, акă, Кувакино районĕнче пăрусен 25,5 проценчĕ, сысна çурисен 14 проценчĕ, путексен 20 проценчĕ вилнĕ, Çĕмĕрле районĕнче—пăрусен 21 проценчĕ, сысна çурисен 19 проценчĕ, путексен 13 проценчĕ, Шупашкар районĕнче — пăрусен 19 проценчĕ, сысна çурисен 20 проценчĕ, путексен 14 проценчĕ, Первомайски районра—пăрусен 20 проценчĕ, сысна çурисен 20 проценчĕ, путексен 8 проценчĕ вилнĕ.

Çамрăк выльăхсем нумай вилни, пĕр енчен, выльăхсене хĕл каçармашкăн хуралтăсене начар хатĕрленинчен, ăма выльăхсене (пуринчен ытла пăрулас, хăмлас, çăвăрлас умĕн) начар пăхнинчен килет, тепĕр енчен вăл—уйрăм колхозсемпе районсенче хăшпĕр чухне выльăх пăхма тÿрĕ кăмăлпа ĕçлемен çынсене хушнинчен килет, çав çынсем вара хăйсен ĕçне ячĕшĕн çеç туса пыраççĕ.

Пирĕн çакна лайăх ăнланса илмелле: малашне пур йышши выльăхсен хисепне те вĕсене колхозниксемпе единоличниксенчен илнипе мар (хăшпĕр колхозсенче çавăн пек тăваççĕ), колхоз фермисенче ĕрчетнипе ÿстерсе пымалла.

Вак выльăх-чĕрлĕхе, кайăксене тата кайăк-кĕшĕке ытларах ĕрчетмешкĕн пирĕн республикăра пур условисем те пур. Çаксем вĕсем вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕршывăн апат-çимĕç тата промышленность чĕрташ-рĕсен запасне ÿстерес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах та пирĕн республикăри чылай колхозсемпе районсенче кролик ĕрчетес ĕç, хурт-хăмăр ĕçĕ питĕ çителĕксĕр саралнă. Уйрăм районсенче колхозсемпе пĕчĕк хуçалăхсем шывра ишсе çÿрекен кайăк-кĕшĕксем нумай ĕрчетеççĕ пулин те, çавăн пек кайăк-кĕшĕксен фермисене тăвас ĕç пирĕн питĕ начар пырать-ха.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре выльăх апачĕ хатĕрлесси пысăк ĕç пулса тăрать. Кăçал пирĕн республикăра нумай колхозсем выльăх апачĕсене вăхăтра хатĕрлесе хучĕç.

Пур колхозсенче те шултăра апатсене халех турттарса кĕмелле, хĕллехи çил-тăмансен вăхăчĕ валли тата çуркуннехи çулсем пăсалнă вăхăт валли, çавăн пекех тата мĕн пирки те пулин выльăх апачĕ çитмен колхозсене пулăшмашкăн тĕкĕнмелле мар запас туса хумалла.

Хальхи вăхăтра выльăх апатне тĕрĕс те перекетлĕн расходлас тĕлĕшпе нумай ĕç туса ирттермелле. Кашни колхозрах хĕллехи вăхăтра кашни уйăхра мĕн чухлĕ апат тата мĕнле нормăпа памаллине шутласа хумалла. Çак ĕçе васкаса тумалла. Ăна тумашкăн колхозсене çĕрĕç органĕсен работникĕсемпе специалисчĕсем пулăшмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре хальчи хĕруллĕ, чи ответлă тапхăр килсе çитет. Часах выльăхсем пăрулама, çăвăрлама тытăнаççĕ. Çав вăхăт тĕлне пур енчен те хатĕрленсе çитмелле: çамрăк выльăхсем валли çуртсем хатĕрлемелле, вĕсене пăхма чи опытлă çынсене уйăрса хумалла, ăма выльăхсене уйрăмах лайăх пăхмалла. Колхозсенчи фермăсенче выльăхсене пăрулаттарма, çăвăрлаттарма чи лайăх картишсемпе çурт-хуралтăсем тата çамрăк выльăхсем валли чи ăшă та сутă пÿртсем уйăрса хурсан аван.

Выльăхсене пăхакан çынсене тĕрĕс суйласа илес, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас тата тĕплĕн вĕрентес ĕç çине пирĕн питĕ хытă çавăрăнса пăхмалла. Уйрăм колхозсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх пăхакан çынсене вĕрентессишĕн тата вĕсене нумай вăхăта çирĕплетсе хурассишĕн тăрăшмаççĕ. Çавăн пек колхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакан çынсем улшăнса тăни ĕçе пысăк сиен кÿрет. Çав çынсен квалификацийĕпе пĕлĕвĕсене ÿстерсе пымалла, вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе юратакан çынсем пулса тăччăр.

Хĕллехи вăхăтра фермăра ĕçлекенсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле, мĕншĕн тесессĕн вăрçă пуçланнăранпа вĕсен йышĕ те нумай улшăннă. Районсенчи çĕрĕç органĕсен чи лайăх фермăсенче таврари 3—5,10 фермăри работниксен квалификацине хăпартмалли курссем тумалла. Çавăн пек курссенче зоотехникăпа ветеринари работникĕсемпе пĕрле выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мастерсем те вĕрентеççĕ. Çавăн пек курссене чи лайăх фермăсенче туни çав курссенче вĕренекен çынсене практикăллă ĕçпе лайăх паллаштарма май парать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнÿсем куç умĕнчех, вĕсене пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем лайăх курса тăраççĕ. Анчах пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, колхозсен руководителĕсем, çавăн пекех тата районсемпе республикăри çĕрĕç органĕсемпе парти организацийĕсен руководителĕсем аслă Сталинăн çак кăтартăвне асра тытаççĕ: «Совет çыннисем тунă çитĕнÿсемпе чарăлса, лăпланса ларма вĕренмен. Пирĕн хушăра лăпланса ларма тытăнсан, çĕнтерĕве алăран вĕçертме пулать. Кĕрешмесĕр, вăй хумасăр çĕнтерсе илме çук. Ăна çапăçса çĕнтерсе илеççĕ».

Пирĕн аслă çулпуçĕн çак кăтартăвне пĕтĕм совет халăхĕ, çав шутра Чăваш республикинчи ĕççыннисем те, тăшмана çапса аркатмашкăн фронта пулăшас ĕçри боевой программа вырăнне хурса йышăннă.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз паянхи кун тĕлне çуракине хатĕрленсе çитрĕ. Çителĕклĕ таранах вăрлăх сортланă. Ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе колхоз тимĕрçи Ф. Волков юлташ тăрăшса ĕçлет. Вăл 28 плуг, 4 сеялка, 4 жнейка тата 60 тимĕр сÿре юсаса лартрĕ. Декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 40 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 15 центнер фекали пухнă. Кăçал уя 5.000 лав тислĕк кăлармалла. Вăл шутран 3.000 лавне кăларнă та ĕнтĕ, 100 гектар çинче юр тытнă.

Кунта ятарласа агрокружок организациленĕ. Занятисем кашни 3 кунта пĕрре пулса пыраççĕ. Кружока колхоз председателĕ Николаев юлташ хăй ертсе пырать.

Колхоз çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те мухтава тивĕçлĕн ĕçлет. 85 пуç лаша пулмалла пулсан, 97 лаша пур. Сысна, сурăх тата ĕне-выльăхсен йышне ÿстермелли плансене те ытлашшипех тултарнă. Кунта çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарма 3 ăшă вите хатĕрленĕ. Ферма работникĕсем уйрăмах тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Сурăхсем пăхакан Козловăпа Кириллова юлташсем кăçал 50 сурăхран 75 путек илме сăмах панă. Халĕ вĕсем 25 сурăхран 43 путек илнĕ те ĕнтĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес ĕçре çитĕнÿсем тунăшăн партипе правительство колхоза тивĕçлипе хакларĕç. Колхоз председательне Николаев юлташа СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ «Социализмлă ялхуçалăх ĕçĕн отличникĕ» значокпа наградăларĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

2000 ЛАВ ТИСЛĔК ТĂКНĂ

КАНАШ. Аччари «Хĕрлĕ Çар» колхоз килес çул вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе, тăватă кун хушшинче уя 2000 лав ытла тислĕк кăларчĕ.

Ку ĕçре 60 çулхи старик Данилов юлташ калама çук хастарлă ĕçлет. Вăл кашни кун 50 лавран кая мар тислĕк турттарать. Ытти колхозниксем те уя тислĕк кăларас пирки ăмăртса ĕçлеççĕ.

А. ВОЛКОВА.

Çуракине тимлĕн хатĕрленетпĕр

Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн эпир çитес çуракине хатĕрленме тытăнтăмăр. Паянхи кунччен 12 плугран 9-шне юсаса лартрăмăр, 3-шне çитес кунсенче юсаса пĕтеретпĕр. Кунсăр пуçне пирĕн триер пур, вăл та юсавлă.

Кирек мĕнле ĕçре те лаша таврашĕсем çитменни пысăк чăрмав кÿрет. Çакна асра тытса, эпир пур лашасем валли те кÿлмелли хатĕрсем хатĕрлерĕмĕр. 23 лаша валли урапа, ĕнерчĕк, хăмăт йăлтах çителĕклĕ.

Кăçал пирĕн иртнĕ çулхинчен 23 гектар ытларах тырă акса хăвармалла, пурĕ 147 гектар çуртырри акмалла. Вăрлăхсем çителĕклĕ. Сăмахран, сĕлĕ 73 гектар акмалла пулсан, ăна валли эпир 120 центнер уйăрса хăварнă. Ку таринччен вара 30 центнер пăри, 22 центнер сĕлĕ, 13 центнер ясмăк сортланă.

Çак ĕç уйрăмах Абрамов юлташăн бригадинче ăнăçлăн пулса пырать. Кунта пăри вăрлăхне çеç сортласа пĕтереймен.

Халĕ колхозниксем кунпа пĕрлех уя тислĕк кăлараççĕ. Юлашки вăхăтра кăна çуртыррисем акмалли çĕр çине 540 лав тислĕк кăлартăмăр.

П. ИГНАТЬЕВ,
Элĕк районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» колхоз председателĕ.

Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ

Ишлей районĕнчи Таганар ялсоветĕнчи «Верный путь» колхоз членĕсем хĕллехи агротехника ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Вăрлăхсене çителĕклĕ таран хывнă, иккĕмĕш хут сортланă, 20 плуг, 20 сÿре, 3 сеялка юсаса лартнă. 36 лаша валли кÿлмелли хатĕрсем çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Халь колхозниксемпе колхозницăсем юр тытса хăварас пирки тăрăшса ĕçлеççĕ. Ĕнер 2 гектар çинче юр тытнă.

А. ТОЛСТОВ.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи самолечĕсем паян Берлина тапăннă чухне Берлин çине 1000 тонна ытла бомба пăрахнă. Хулăра вăйлă пушарсем тухнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем сывлăшран пыра-пыра тапăннине пула Берлинра пурăнакан 4 миллион çынтан пĕр миллион çурă çын килсĕр-çуртсăр тăрса юлнă. Çав хыпарсем тăрăхах, Берлин хули 60 процент таран ишĕлсе пĕтнĕ.

Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлина пырса тапăннă вăхăтра ытти самолетсем Вăтаçĕр тата Хĕвеланăç Германие атакăланă. 17 самолет хăйсен базисене таврăнман.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕН ПЫСĂК УШКĂНĔ ПА-ДЕ-КАЛЕ РАЙОННЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америкăн 1.300 самолечĕ ытла Па-де-Кале районĕнче специальнăй çар сооруженийĕсене пырса тапăннă. Америка самолечĕсем кун пек пысăк ушкăнпа пырса тапанни ... халиччен пулманă-ха.

КĔСКЕН

** Дюссельдорф çывăхĕнчи Вуппертальри концентрациллĕ лагере нимĕçсем икĕ çул каярах тытса хупнă 1.800 çынтан халь 500 çын çеç тăрса юлнă, ыттисене персе вĕлернĕ, е вĕсем выçăпа, хĕненипе вилсе пĕтнĕ.

** Швецири чи пысăк ученăйсенчен пĕри Леннарт фон Пост, нимĕçсем Ослори университетра вĕренекен студентсене арестлени çине ответлесе, Кенигсбергри университет панă хисеплĕ доктор дипломне Германие каялла ярса панă.

СОЮЗНИКСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИНЕ ÇĔНĔ ÇЫНСЕМ ЛАРТНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян каçпа Лондонра правительствăн çакăн пек пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă:

«Унăн Величествин правительстви ячĕпе çакăн çинчен пĕлтерессĕ: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ тата Англи премьерĕ пĕрле каласса татăлнă тăрăх, Англипе Америкăн Пĕрлешÿллĕ Королевствăрэ Европăна ирĕке кăларма организацилекен экспедициллĕ çарĕсен верховнăй главнокомандующийĕ пулма Эйзенхауэр генерала лартнă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ пулма Генри Мэйтланд Вильсон генерала лартнă. Союзниксен Италири çарĕсен главнокомандующийĕ пулма Гарольд Александер генерала лартнă. Англин Эйзенхуэр верховнăй главнокомандующи пулса ертсе пынă арми ушкăнĕн главнокомандующийĕ пулма Бернар Монтгомери генерала лартнă. Америкăн Германие хирĕç кĕрешекен стратегиллĕ бомбардировочнăй авиацийĕн командующийĕ пулма Карл Спаатс генерала лартнă. Ытти вырăнсене çынсем лартни çинчен каярах пичетлесе кăлараççĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

4-а Нефтебазăн 9673 тенкĕлĕх лимитированнăй 219/10901 номерлĕ чек кĕнекине, çухалнă пирки, законлă мар тесе шутламалла.

Дирекци.

Чăваш АССР-ĕн Автоуправленийĕ сумĕнчи автотранспорт контори шоферсен 3 уйăхлăх курсне вĕренме курсантсем илет. Курсра радиатор цехĕнче ĕçлеме çакăн пек шоферсене хатĕрлеççĕ: автослесарь-мотористсене, токарь-вулканизаторщиксене, электриксене тата медниксене.

Курса арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, 17 çултан пуçласа 35 çула çитиччен илеççĕ.

Курсантсене çăкăр карточкисем автотранспортри рабочисемпе пĕр пекех параççĕ, кĕрри апат пур, стипенди парса тăраççĕ.

Заявленисене Автотранспорт конторин начальникĕ патне çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 67, кг. 1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 1178